**Çырмари концерт**

Çырмара концерт пуçланă,
Дирижерĕ Ват шапа.
Улăхĕ, кӳлли, вăрманĕ
Янăрать çĕршер саспа.

Кăвва-кăвва, па-ка-как!
Тăр-тăр-тăр!.. Ак-ак-ак!..

Пулăсем пуçне кăларнă.
Шăп лараççĕ кайăксем,
Куянсем те тимлĕн ларнă -
Киленеççĕ итлесе.

Сарă тилĕ, сăрă кашкăр,
Шурă юс, мăран упа...
Пурте килнĕ итлемешкĕн,
Пурте ăшшăн ал çупать.

Кăвва-кăвва, па-ка-как!
Тăр-тăр-тăр!.. Ак-ак-ак!..

*Вирьял,Ю. Çырмари концерт : [сăвă] / Ю. Вирьял // Чăваш литературин антологийĕ. — Шупашкар, 2015. — [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. — С. 275.*